Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

20 (7660) № * Юн кун, 2009 çулхи мартăн (пуш) 11-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

**Ĕçсĕрлĕх ыйтăвĕпе**

## Пирĕн района – 12 млн. тенкĕ

Пĕтĕм тĕнчери финанс кризисĕ пирĕн республикăран та аякка пăрăнса иртмерĕ. Ĕçсĕрлĕх ыйтăвне палăрмаллах çивĕчлетрĕ. Çавна май республикăра 2009 çул валли халăха ĕçпе тивĕçтерессине пулăшмалли тĕллевлĕ программа йышăннă. Иртнĕ эрнере район администрацийĕн ларусен залĕнче предприятисемпе организацисен, учрежденисен ертӳçисемпе ирттернĕ канашлура Чăваш Республикин ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин пай пуçлăхĕн çумĕ Т.А. Аскарова çакна палăртрĕ. Ĕçсĕррисене пулăшма Раççей Федерацийĕн бюджетĕнчен пирĕн республикăна 500 миллион тенкĕ уйăрнă. Унсăр пуçне республика бюджетĕнчен çакна валли тата – 26 миллион тенкĕ ытларах.

Асăннă укçа-тенкĕне массăллăн ĕçрен тухса каяс ушкăна лекнисене вĕрентнĕ, çак лару-тăрăва кĕрсе ӳкнисене валли вăхăтлăх ĕç вырăнĕ тупса панă, обществăлла ĕçсене йĕркеленĕ, республика тулашне ĕçлеме каякансене тĕллевлĕ пулăшу панă çĕрте усă кураççĕ. Çавăн пекех – пĕчĕк предпринимательствăна аталантарса, çынсене çапла майпа хăйсене валли ĕç вырăнĕ тупма.

Çӳлерех асăннă пĕтĕмĕшле суммăран 12 миллион тенкине пирĕн район тивĕçет. Асăннă программăпа килĕшӳллĕн районти хăш предприятире мĕн чухлĕ ĕç вырăнĕ пуласси паллă. Палăртмалла, çак сумма районти ĕçсĕррисене 3 уйăхлăха ĕçпе тивĕçтерме май парать. Тулли ĕç кунĕпе ĕçлекенсене чи пĕчĕк ĕç укçинчен кая мар тӳлеççĕ. Çак суммăна предприятисене районти ĕçпе тивĕçтерекен центр саплаштарать.

Районти хăш предприятисенче, учрежденисенче миçе çынна ĕç тупма май парĕ çак ĕçсĕррисене пулăшмалли тĕллевлĕ программа? Çакăн çинчен тата ĕçсĕррисене ĕçпе тивĕçтересси районта мĕнле пулса пыни çинчен хаçатăн çитес номерĕсенчен пĕринче тĕплĕнрех пĕлме пултаратăр.

**Л.ПАВЛОВА.**

**ЧР Президенчĕн стипендиачĕсем**

## Хастар çамрăксенчен пĕри



***Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Юрий Гордянович Орлов Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăхра вăй хурать. Çамрăк механизатор хăйĕн ĕçне аслисенчен юратса тата тĕплĕн тума хăнăхса пырать. Çапла ĕçлесе ĕнтĕ вăл пĕлтĕрхи çул районти кăна мар, республикăри хастар çамрăксенчен пĕри пулса тăчĕ. ЧР Президенчĕн стипендине тивĕçлипех илме пуçларĕ кăçал çамрăк специалист. Унăн ĕç кăтартăвĕсем вара ытти çамрăксемшĕн тĕслĕх вырăнне пулмалла.***

**Н. НИКОЛАЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Вĕрентӳ**

## Пĕрлехи патшалăх экзаменĕсем çывхараççĕ

**( Малалли. Пуçламăшĕ иртнĕ номерте).**

**Ыйту: Манăн ача тăххăрмĕш класс пĕтерет. Унăн мĕнле экзаменсем тытмалла пулать?**

**Хурав:** Тăххăрмĕш классенчен вĕренсе тухакансем пĕрлехи патшалăх экзаменĕсене тытмаççĕ. Вĕсен пĕрлĕхлĕ муниципаллă экзаменсем пулаççĕ. Уйрăмлăхĕ акă мĕнре: экзаменăн пĕр пайĕ тест формипе иртет, экзаменсене те шкулти учительсем мар, муниципаллă комисси йышăнать. Кăçал тăххăрмĕшсен 4 экзамен тытмалла пулать. Алгебра тата вырăс чĕлхи – обязательнăй майпа, шăпах вĕсене муниципаллă комисси йышăнать те. Тепĕр иккĕшне вара ача суйласа илет. Анчах та вăл биологи, физика, чăваш чĕлхи, хими, геометри, географи, Раççей истройиĕ е обществознани предмечĕсене суйласа илет пулсан, вĕсене те шкулти учительсем мар, вырăнти комиссисем йышăнĕç.

**Ыйту: Манăн хĕр ача кăçал колледжран вĕренсе тухать. Вăл май-июнь уйăхĕсенче шкул пĕтерекенсемпе пĕрле ППЭ тытма пултарать-и?**

**Хурав:** Пултарать. Пуçламăш тата вăтам профессиллĕ вĕрентӳ учрежденийĕсенчен вĕренсе тухакансем ППЭ пĕрремĕш тапхăртах тытаççĕ. Паллах, вĕсем мартăн 1-мĕшĕччен вырăнти вĕрентӳ пайне заявлени çырса панă пулсан.

**Ыйту: Куçăмсăр майпа вĕренме кĕрес текенсен те ППЭ тытмалла пулать-ши?**

**Хурав:** Хальлĕхе вĕренме кĕмелли условисем пурин те пĕрешкел. Анчах Раççей вĕрентӳ министрĕн çумĕ Исаак Калина каланă тăрăх, аслă шкулсем 2009 çулччен алла аттестат илнисене куçăмсăр майпа вĕренме йышăнмалли условисене хăйсем палăртассине ĕçе кĕртмелле. Анчах ку тĕлĕшпе хальлĕхе нимĕнле официаллă документсем те çукха.

**Райадминистрацире**

## Хисеп грамотине тивĕçнĕ

***Федераллă казначействăн Чăваш Республикинчи управленийĕн районти пайĕ, «РФ Финанс министерствин ведомство хуралĕ» патшалăх учрежденийĕн 48-мĕш отрячĕн филиалĕ, Муркаш почтамчĕ, районти тĕп больница, «Свобода» хуçалăх, «Вита» чикĕллĕ яваплăхлă общество – Муркаш районĕнчи Юнкăри сĕт цехĕ, «Моргаушское» пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх тата Хорнуй ял тăрăхĕн администрацийĕ ыйтнисене тивĕçтерсе, район администрацийĕн пуçлăхĕн 2009 çулхи мартăн 5-мĕшĕнчи 129 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

1. Çыхăну ĕçĕнче нумай çăл тăрăшса вăй хунăшăн:

– **Юлия Сергеевна ВАНЮШКИНАНА**, Муркаш почтамчĕн Ярославкăри çыхăну уйрăмĕн пуçлăхне;

– **Надежда Викторовна ГАВРИЛОВАНА**, Муркаш почтамчĕн Мăн Хураçкари çыхăну уйрăмĕн пуçлăхне;

– **Алефтина Аркадьевна ЯКИМОВАНА**, Муркаш почтамчĕн почтăпа ярса паракан япаласене çитерсе парас енĕпе ĕçлекен почтальонне.

2. Федераллă казначейство органĕсенче гражданла служба тивĕçне лайăх пурнăçланăшăн – **Сергей Ростиславович ВОЛКОВА**, Федераллă казначействăн Чăваш Республикинчи управленийĕн районти пайĕн ертсе пыракан специалист-экспертне.

3. Должноçри тивĕçĕсене пахалăхлă пурнăçланăшăн – **Денис Михайлович ДАШКОВА**, Федераллă казначействăн Чăваш Республикинчи управленийĕн районти пайне хӳтĕлекен комендатурăн дежурнăйне.

4. Нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн тата çынсен сывлăхне сыхлас енĕпе тунă çитĕнӳсемшĕн – **Константин Ананьевич МРАЗОВА**, районти тĕп больницăн васкавлă медицина пулăшăвĕн уйрăмĕн фельдшерне.

5. Ĕçре çитĕнӳсем тунăшăн тата ферма çуртне реконструкци тăвассипе çине тăрса ĕçленĕшĕн – **Виталий Васильевич НИКИТИНА**, «Свобода» пĕрлешӳллĕ хуçалăхăн ăратлă сыснасем ӳстерекен Кашмашри фермăн заведующине.

6. Сĕт продукцине тирпейлессин системинче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн – **Елена Николаевна МУКАШЕВАНА**, «Вита» чикĕллĕ яваплăхлă общество – Муркаш районĕнчи Юнкăри сĕт цехĕн тĕп бухгалтерне.

7. Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх системинче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн – **Сергей Апполонович ХРУСТАЛЕВА**, «Моргаушское» пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн электричество сечĕсене пăхса тăракан электромонтерне.

8. Ял урамĕсене тирпей-илем кĕртес тата обществăлла ĕçсене активлă хутшăннăшăн:

– **Сергей Николаевич КОРОЛЬКОВА**, Хорнуй ялĕн çыннине;

– **Юрий Николаевич СКВОРЦОВА**, депутатсен Хорнуй ял тăрăхĕнчи Пухăвĕн депутатне.

**Ыйту – хурав**

## 2010 çулхи халăх çыравĕ

**ЫЙТУ: – Пĕтĕм Раççейри халăх çыравне ирттермелли тĕп принципсем пирки пĕлес килет.**

**ХУРАВ:** – Халăх çыравне ирттерсе уйрăм вăхăт тĕлне Раççей Федерацийĕн территорийĕнче пурăнакан çынсем пирки сведенисем пухаççĕ. Ăна Раççей Федерацийĕн пĕтĕм территорийĕнче пĕрлехи патшалăх статистика методологийĕпе ирттереççĕ. Унăн итогĕсем пĕтĕмĕшле демографи, экономика тата социаллă сведенисем пухма май параççĕ.

Халăх çыравне çыннăн тата гражданинăн прависене тĕпе хурса ирттереççĕ, харпăр хăйĕн пурнăçне тата çурт-йĕрне сиен кӳмеççĕ.

Халăх çыравĕ ирттерсе пухнă сведенисемпе çынна тата гражданина пурлăх тата мораль тĕлĕшĕнчен сиен кӳрес, унăн прависемпе ирĕклĕхĕсене пурнăçа кĕртме кансĕрлес тĕллевпе усă курма юрамасть.

Пĕтĕм Раççейри халăх çыравне хутшăнасси çыннăн тата гражданинăн обществăлла тивĕçĕ пулса тăрать.

**ЫЙТУ: – Пĕтĕм халăх çыравĕн право тĕлĕшĕнчи тытăмĕ мĕнре?**

**ХУРАВ:** – Пĕтĕм халăх çыравĕн право тĕлĕшĕнчи тытăмĕ Раççей Федерацийĕн Конституцийĕ, халăх çыравĕ пирки калакан федераллă саккун, ытти федераллă саккунсемпе Раççей Федерацийĕн нормативлă право акчĕсем пулса тăраççĕ.

**ЫЙТУ: – Çырава миçе çулта пĕрре ирттереççĕ, унăн срокĕ тата дати мĕнле?**

**ХУРАВ:** – Пĕтĕм халăх çыравне 10 çултан кая юлмасăр тапхăрта ирттерме тивĕç. Унăн срокĕ çынсем пирки сведенисем пухмалли тапхăра пĕлтерет. Çырав дати вăл – çынсем пирки сведенисем пухса ăна учета илнин саманчĕ (çул, уйăх, кун тата сехет).

Пĕтĕм халăх çыравĕн срокĕпе датине Раççей Федерацийĕн Правительстви палăртать.

**З. ВИНОГРАДОВА,**
**Чăвашстатăн предприятисен статистикин Муркаш районĕнчи пайĕн тĕп специалист-эксперчĕ.**

**Çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатассишĕн**

## Юсав ĕçĕсене 9 çуртра туса ирттерĕç

***Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ 2009 çул валли «Чăваш Республикин территорийĕнче вырнаçнă нумай хваттерлĕ çуртсене капиталлă юсасси» адреслă программа йышăннăччĕ. Çакă гражданcене пурăнма йĕркеллĕ те хăрушлăхсăр условисем туса парассипе, пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха реформăлас ĕçе активлăлатассипе çыхăннă.***

***Асăннă тĕллевлĕ программăна республикăри 19 муниципаллă йĕркеленӳ хутшăнать. Вăл шутра Муркаш районĕ те. Çавна май район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕпе, капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕпе Владимир Германович НИКИТИНПА тĕл пулнă май кăçал мĕнле юсав ĕçĕсем туса ирттерме палăртни пирки тĕплĕнрех каласа пама ыйтрăм.***

– Капиталлă юсав ĕçĕсен программипе килĕшӳллĕн районĕпе юсав ĕçĕсене нумай хваттерлĕ 9 çуртра туса ирттерме пăхнă. Уйрăмшарăн илес пулсан кусем вĕсем Мăн Сĕнтĕрте Заводская урамри 22-мĕш, Новая урамри 32-мĕш, Ярославкăра Центральная урамри 2-мĕш, Муркашра Южная урамри 5-мĕш, Октябре 50 çул урамри 10-мĕш, Ленин урамĕнчи 38-мĕшпе 32-мĕш, Москакассинче Молодежная урамри 6-мĕшпе 8-мĕш çуртсем.

Çуртсенче юсав ĕçĕсене туса ирттерме палăртнă чух чи малтанах вĕсенче ку çуртсенче пурăнакансен юлташлăхĕсене йĕркеленипе йĕркелеменнине те шута илнĕ, вăл шутра 2008 çулта йĕркеленисене те. Юсав ĕçĕсем шутĕнче нумай хваттерлĕ çуртсен çийĕсене, фасачĕсене, инженери коммуникацийĕсене тата путвалсене юсаса тивĕçлĕ йĕркене кĕртесси.

Юсав ĕçĕсене пĕтĕмпе 11159755 тенкĕлĕх пурнăçлама пăхнă. Вăл шутран 7600707 тенкине пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха реформăлама пулăшакан фондран, 1500000-шер тенкине республика тата вырăнти бюджетсенчен уйăраççĕ, 559048 тенкĕ – ТСЖ, ЖК, ЖСК е хваттер хуçисен шучĕпе. Вăтамран юсав ĕçĕсем пĕр тăваткал метр пурăнмалли çурт-йĕр пуçне 1628 тенкĕне лараççĕ.

Пĕтĕм документсене хатĕрлесе çитерсе Мускава тăратсан федераллă бюджетран укça-тенкĕне куçарса пама тытăнаççĕ. Халĕ çак ĕçсем пыраççĕ те. Çу кунĕсем çитсен юсав ĕçĕсене тытăнма палăртатпăр.

Çавна та каласа хăварасшăн. Капиталлă юсав ĕçĕсене туса ирттерессипе подрядлă строительство организацине суйласа илме ятарлă конкурс пулать. Ку е вăл ĕçсене конкурсра çĕнтернĕ подрядчик пурнăçлать.

**Юбилей**

## Саламлатпăр

Çĕньял Муркаш ялĕнче пурăнакан **Виталий Петрович НИКОЛАЕВА** 60 çулхи юбилейпа чун-чĕререн те ăшшăн саламлатпăр. Пурнăçра вăрăм кун-çул, çирĕп сывлăх, иксĕлми телей сунса çак сăвва парнелетпĕр.



Тĕлĕнтермĕш кун – çуралнă кун,
Тунти кун е ытлари кун.
Пурпĕрех асра юлать çак кун,
Çут тĕнчене килнĕ çамрăк чун.
Е хĕлле çуралнă эсĕ, е çулла,
Çуркунне е ылтăн кĕркунне.
Çирĕп ут эс пурнăç çулĕпе,
Алра тыт тур панă телейне.

Çурлатринчи **Леонид Яковлевич КОЛЬЦОВА** та çуралнă кунĕпе ăшшăн саламлатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем.**